25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
30
ЮНКУН
301(6236) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Декабрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем КОТЕЛЬНИКОВО хулине тата чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Нумай трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен хушшинче авиаци пурлăхĕпе танк таврашĕсем нумай, çавăн пекех тата юсавлă 17 самолет, танксем тиенĕ эшелон пур. Трофейсене шута илеççĕ.

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра тата Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пыраççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Чăваш АССР-ĕнчи Пăрачкав районĕнчи „Красный пахар" колхоз

Колхоз председательне Михаил Владимирович ДУБРОВИН юлташа

Спасибо Сире, Михаил Владимирович, Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн. Эсир кăмăл туни пурнăçа кĕрĕ. Манăн салама йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

Эпĕ, Чăваш АССР-ĕнчи Пăрачкав районĕнчи «Трактор» колхозăн председателĕ, Кашечкин Николай Степанович, хамăн перекетлесе хăварнă укçа-тенкĕрен танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 50 пин тенкĕ хывăтăп.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ, ПАРАЧКАВ РАЙОНĔНЧИ «ТРАКТОР» КОЛХОЗĂН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ КАШЕЧКИН НИКОЛАЙ СТЕПАНОВИЧ

Таджик ССР-ĕ, Конташ райсовечĕ, Сайбназаров юлташа

Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй вăйĕсем валли тăрăшнăшăн Сире, Сайбназаров юлташ, хамăр салам калатăп тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Мускав облаçĕнчи Кунцево районĕнчи „Заря социализма" колхоз. Колхоз председательне Сергей Петрович Аверина

«Заря социализма» колхозăн колхозниксемпе колхозницăсене тата Сире, Сергей Петрович, Эсир Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнăшăн тав тăватăп. Манран салам йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра малалла наступлени туса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра **Чертково** хулипе чугунçул станцине, **Пасюков, Калинов, Высочанов, Рудово, Прооямый, Кризское, Черновый** ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, 20—25 километр малалла кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра **Заветное** ятлă район центрне, **Верхне-Курмоярская, Нижне-Яблочный, Майорский, Нагольный, Караичев, Крайняя Балка, Поперечный, Бударка, Крылов, Шабалин, Ново-Иловлинский, Никольский, Киселевка, Кетченеры, Кичкино** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата **Небыковская, Гремячая, Курмоярский** ятлă чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Центральнăй фронтра тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă.

Сталинград районĕнче противникăн 24 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне, войскăсемпе груэсем турттарса пыракан 140 автомашинине çити тата горючи тултарнă 6 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, штурмлакан отрядсене уйăрăлса кĕрешсе, противникăн укреплениййĕсене пĕтерсе пынă. 36 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ, темиçе çурта тытса илнĕ. Противникăн 150 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшманăн позицийĕсене артиллерирен вăйлăн персе тăнă. Кун каçа нимĕçсен 9 танкне тата 3 орудине пĕтерсе тăкнă е персе çĕмĕрнĕ, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Совет летчикĕсем икĕ кун хушшинче противникăн аэродромĕсем çинче нимĕçсен 25 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противник хăйĕн каялла чакакан войскисене хӳтĕлесе пыма ятарласа уйрăм отрядсем уйăрса хурать. Совет чаçĕсем нимĕçсене çапăçăва кĕрте-кĕрте ярса вĕсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ. Кун каçа тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ тата нумай çынна тыткăна илнĕ. Самохин ятлă халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçусенче кăна тĕрлĕ калибрлă 30 орудие тытса илнĕ тата нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн пĕр полк пехотине çапса аркатнă боеприпассен 4 складне тытса илнĕ тата 1.500 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем, пирĕн войскăсене малалла кайма чарас тесе, çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ, анчах та совет боецĕсем пыра-пыра çапнипе нимĕçсен çав çĕнĕ чаçĕсем питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем ирхине ирех халăх пурăнакан пĕр пункта çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 650 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, 11 орудие, ултă кĕпçеллĕ 3 миномет, 17 пулемет тата тумтирсен складне тытса илнĕ. Халăх пурăнакан тепĕр пунктшăн пынă çапăçура гитлеровецсем пирĕн малти подразделенисене татса илме тата çавăрса илме хăтланнă. Пирĕн пехотинецсене артиллеристсемпе гвардеец-минометчиксем пулăшнă. Орудисемпе персе тата минометчиксем хаяррăн пере-пере янипе нимĕç пехотине икĕ батальон таран пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен халăх пурăнакан çав пунктра тăнă юлашкийĕсем, 200 çынна çити, тыткăна парăннă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсен пĕр пайĕ наступленилле çапăçусем туса пынă. Великие Луки районĕнче хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн подразделенисем противникăн хирĕç тăмалли тĕреклетнĕ икĕ узелне йышăнса илнĕ. Нимĕçсен контратакисем ăнăçман. Гитлеровецсем çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине ытла пăрахса хăварнă.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противникăн пехотипе танксем пулăшнипе пирĕн пĕр подразделение кăштах каялла чакарнă пулнă. Старши-лейтенант Третьяков ертсе пыракан боецсем, нимĕçсене хирĕç пырса çапса, хăйсен позицийĕсене каялла илнĕ. Çапăçура гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Против-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Тăван çĕршывран фашистла мерзавецсене хăваласа кăларассишĕн пирĕн халăх вăйне те, укçи-тенкине те шеллемĕ

Çулпуç саламĕпе паллашнă хыççăн

Гуськов юлташ 50.000 тенкĕ панă

ИШЛЕЙ. (**Телефонпа**). Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене янă салампа хавхаланса, Ишлей районĕнчи колхозниксем пухусем туса танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа хывас ыйтăва сӳтсе-яваççĕ. Кăшавăшри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен пухăвĕнче танксен колоннине тума 100.000 тенкĕ укçа пухса пама пулчĕç, 70.000 тенкĕ хывреĕç: Колхоз председателĕ Иванов юлташ 5.000 тенкĕ пачĕ, бригадир-животновод Рахманов — 5.000 тенкĕ, конюх Артемьев — 2.500 тенкĕ пачĕç. Кăшавăшри шкулăн виççĕмĕш класĕнче вĕренекен хĕрача А. Горбунцова 500 тенкĕ пачĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Василий Павлович Гуськов юлташ 50.000 тенкĕ пачĕ.

П. СИДОРОВ.

* * *

ТĂВАЙ. (**Телефонпа**). Тăвай районĕнчи ĕççынниcем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 1 миллион та 97 пин тенкĕ укçа хывреĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 70 пин тенкĕ, Тушкилти «Хĕрлĕ Çар» колхоз — 62 пин тенкĕ, «Культура» колхоз — 46 пин тенкĕ, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз — 45 пин тенкĕ, «Искра Ильича» колхоз — 45 пин тенкĕ хывреĕç. Сталин юлташăн саламне илтнĕ хыççăн Тăвай районĕнче Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕç тата вăйлăнрах сарăлса кайрĕ.

В. ЧЕРНОВ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Сталин юлташ пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков юлташ урлă саламлани районри ĕççыннисене çав тери пысăк савăнăç кӳрет.

Паянхи куна районри колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсем танксен колоннисене тума 1.600.000 тенкĕ укçа пухса Госбанкăн Сĕнтĕрвăрринчи отделенине хывнă.

Танксем тума укçа пухас ĕçре Киров ячĕпе тăракан тата «Шордан» колхоз членĕсем пысăк активлăх кăтартреĕç. Вăл колхозсенче кĕске вăхăт хушшинчех 100-шер пин тенкĕ пухнă.

ВКП(б) райкомĕ районри партипе совет активне Сталин юлташăн саламне колхозниксене ăнлантарса пама ялсене ячĕ.

К. РОСТОВЦЕВ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ

Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 500 пин тенкĕ пухса пачĕç тата çавăн çинчен Сталин юлташа çырса пĕлтерчĕç.

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Гаврилов юлташ Сталин юлташран ответлă телеграмма илчĕ. Телеграммăра Сталин юлташ танксем тума çур миллион тенкĕ укçа панă колхозниксемпе колхозницăсене саламлать тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвать.

Çулпуç саламĕпе Хĕрлĕ Çар тавĕ колхозниксене пысăк савăнăç кӳчĕ. Вĕсем ĕç пĕтнĕ хыççăн хавасланса пухăва пуçтарăнчĕç.

— Юратнă çулпуç саламне илтме питех те чыслă, — терĕ колхоз председателĕ Гаврилов юлташ, чаплă пухăва уçса. — Ун пек пысăк чыса тивĕçлĕ пулас тесессĕн çĕршыв умĕнче, Сталин юлташ умĕнче пысăк ĕç тăвас пулать. Эпир хамăрăн ытлашши укçана танксем тума паратпăр. Анчах эпир кунпа лăпланса ларас çук. Çулпуç саламĕпе Хĕрлĕ Çар тавĕ çине ответлесе, фронта малашне татах та вăйлăнрах пулăшăпăр, колхозри ĕçсене пурне те вăхăтра туса пырăпăр. Пирĕн колхоз Сталин ятне чысне тивĕçлĕ пулчĕ пулсан, малашне çав чыса çирĕп тытăпăр!

Сталин юлташăн ответлă телеграммипе Хĕрлĕ Çар тавне илнĕ ятпа пухура пулнисене ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ Караушев, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташсем саламларĕç. Унпа пĕрлех вĕсем колхозниксене çуракине хатĕрленес, вăрман ĕçĕсен планне тултарас, государство умĕнчи парăмсене татас тĕлĕшпе районра пример кăтартса ĕçleме чĕнчĕç.

Пухура тухса калаçакансем нумай пулчĕç. Çулпуçăн саламлă сăмахĕсене илтнĕ хыççăн кашниех хăйĕн чĕре тулли савăнăçне уçса пама тăрăшрĕ.

— Совет влаçĕ пире, кивĕ саманара кунçул курман хресченсене, пурнăç, телей, ирĕк пачĕ; эпир тырă-пулăллă, укçа-тенкĕллĕ пулса тăтăмăр. Танксен хăватлă колоннисене тума эпĕ 11 пин тенкĕ патăм. Халĕ татах ĕçкунĕпе илес тырпултан ытлашши пайне Хĕрлĕ Çара пама пулатăп, — терĕ пухура бригадир Никитин юлташ.

Тăшмана çапса аркатачченех фронта пулăшма, малашне хальхинчен икĕ-виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме хатĕрри çинчен колхоз бухгалтерĕ Бадерко, счетовочĕ Бродова, колхозниксем Леонтьев, Федоров, Никитин, Ермолаева юлташсем каларĕç. Заводской ялсовет председателĕ Петров, колхоз агрономĕ Тимофеев юлташсем предприятисенчи рабочисене пахча-çимĕç сутас, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртрĕç.

Пурте пĕр кăмăллă пулса йышăннă решенире колхозниксемпе колхозницăсем çуракине фронтри пек хатĕрленме, вăрман ĕçĕсен хĕллехи планне срокчен тултарма, танксен колоннисем валли укçа-тенкĕ малашне те пухма, ытлашши тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар фондне пама обязательство илчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Тăшмана çĕмĕрекен танксем тума...

«Эсир пухнă укçа-тенкĕпе хамăрăн тăван çĕршыври заводра питех те чаплă самолет-разведчиксем туса кăларнă. Самолетсен вĕçеври пысăк пахалăхĕшĕн, çирĕп те шанчăклă броньăшăн, самолетсем çинчи лайăх хĕçпăшалсемшĕн тата чаплă фотоаппаратсемшĕн летчиксем Сире тав тăваççĕ»,—тесе çырнăччĕ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенин экипажĕ республикăри ĕççыннисем патне.

Питех те чаплă боевой машина! Ăна тума Кивуйри «1-е мая» колхоз членĕсем те нумай укça-тенкĕ пухса панă. Вĕсем самолетсен экипажĕн ĕçĕсемпе чĕререн савăнаççĕ.

«1-ое мая» колхоз районра чи пĕчĕк колхозсенчен пĕри шутланать, анчах вĕсем тăван çĕршыв умĕнче пысăк ĕç тăваççĕ. Колхоз государствăна мĕнпур парăмсене парса татнă тата ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ. Колхозниксем хăйсен фронтра кĕрешекен тăванĕсене пĕр вĕçĕмсĕр пулăшса тăраççĕ. Паянхи пухăва та колхозниксем, яланхи пекех, вăхăтра пухăнса çитрĕç. Пухура ватăсем те, фронтран аманса килнĕ юлташсем те пулчĕç.

Сăмах колхоз председателĕ, фронтран аманса таврăннă Афанасьев юлташ илчĕ.

— Эпир паян кунта танксен колоннине тума укçа пухасси çинчен сӳтсе явма тивĕçлĕ. Вăл танксем пирĕн чăваш колхозникĕсен ячĕпе пулаççĕ,—терĕ Афанасьев юлташ. Çакăн хыççăн вăл колхозниксене отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче пирĕн танкистсем тăшмана çĕмĕрсе пыни çинчен каласа пачĕ, боевой эпизодсене илсе кăтартрĕ.

— Ну, мĕнле шутлатăр?—ыйтрĕ Афанасьев юлташ.

— Паратпăр, паратпăр!—тесе пĕрлешрĕç ватăсен, хĕрарăмсен, çамрăк колхозниксен сассисем. Çакă вăл икĕ сăмах пулсан та, вĕсем тăван çĕршыв умĕнче пысăк ĕç тунине пĕлтерчĕç.

Чи малтан колхоз председателĕ М. Афанасьев хăй 1.500 тенкĕ пачĕ, фронтран аманса килнĕ Д. Прокопьев юлташ та 700 тенкĕ пачĕ.

— Мана сăмах парăр-ха?—ыйтрĕ хĕрарăмсенчен пĕри.—Пирĕн, колхозниксен ячĕпе танксен колонни туни вăл питĕ аван. Фронтовиксем эпир вĕсемшĕн тăрăшнине пĕлсе тăччăр. Хамăн та упăшкапа икĕ ывăл фронтра. Эпĕ вĕсене пулăшма кирек хăçан та хатĕр. Халĕ танксем тума 1.000 тенкĕ паратăп,—терĕ П. Волкова юлташ.

Пуху хупăннă тĕле танксен колоннине тума 15.730 тенкĕ укçа пухăннă. Ку ĕç халĕ те пырать.

ЯКОВ СИГАИ.

Тамбовецсен примерĕпе

КАЛИНИНО. Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне сӳтсе-явнă хыççăн, педагогика училищинче вĕренекенсем хушшинче танксен «Народный учитель» колоннине тума укçа пухасси татах та анлăн сарăлса кайрĕ. Училищĕре вĕренекенсем пурĕ 4.150 тенкĕ пухса панă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах III-мĕш «А», 1-мĕш «В» классем лайăх ĕçлерĕç. Ку классем кашниех 800-шер тенкĕ пухса панă. В. Карпов, Н. Петрова, М. Иванов тата И. Прокопьев юлташсем танксем тунă çĕре 50-шер тенкĕ хывреĕç.

— Пирĕн аттесемпе пиччесем фронтра тăшмана хирĕç вилĕмрен шикленмесĕр кĕрешеççĕ. Эпир, вĕсен ачисемпе шăллĕсем, тăван фронтовиксене хамăрăн укçапа пулăшар,—теççĕ вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар валли танксем тума укçа хывса.

А. ФИЛИППОВ.

Федор Курочкин 20.000 тенкĕ хывнă

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паллă тракторист Федор Курочкин «СТЗ» тракторпа ĕçлесе 325 гектар вырăнне 580 гектар сухаланă, çунтармалли сĕрмелли япаласене сахал мар перекетленĕ.

Патриот-колхозник Ферапонт Головатый примерне йышăнса, Курочкин юлташ танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 20.000 тенкĕ укçа пама килĕшнĕ. Хальхи вăхăта вăл Госбанкăн районри отделенине 12.000 тенкĕ хывнă, юлашки 8.000 тенкине çĕнĕ çул тĕлне хывать.

Пĕр çулталăк

МТС-сенче политотделсем тунăранпа кĕçех çулталăк çитет. Çак хушăра Тăвай МТС политотделĕ хăйĕн ĕçне МТС-сенчи тата колхозсенчи кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас, ĕç дисциплинине çирĕплетес, ĕçе лайăх организацилес тĕллевпе туса пычĕ. Пур колхозсемпе бригадăсенче те тенĕ пекех массăллă-политикăллă ĕç вăйланчĕ. Çапла вара район кăçал 9.185 гектар çинчи кĕр тыррине августăн 15-мĕш тĕлне, 6.883 гектар çинчи çуртыррине сентябрĕн 16-мĕш тĕлне вырса пуçтарчĕ: Çавăн пекех 964 гектар çинчи çĕрулмие, 140 гектар çинчи пахча-çимĕçе, 480 гектар çинчи техникăлла культурăсене ăнăçлăн пуçтарса кĕчĕ. Пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне пирĕн районри колхозсен çуррийĕ çеç кĕлтесене капана хывас ĕçе вĕçленĕ пулсан, кăçал вара виçĕ колхозсăр пуçне районри пур колхозсем те авăн çапас ĕçе вĕçлерĕç.

Колхозниксемпе трактористсем, Сталин юлташăн историллĕ документчĕсемпе тата ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе пĕçлăнмалласа, вăй-хала хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç, вăйлă тырпулшăн кĕрешрĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем производствăра малта пырса, ĕççыннисене хăйсен хыççăн ертсе кайрĕç. Сăмахран, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Илья Бонифатьев юлташ колхозниксен хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Вăл ертсе пынипе Нăрваш Кушкă колхозĕн членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕç. Вĕсем 1943 çулхи обязательствăсен шучĕпе государствăна 600 пăт тырă, 120 пăт аш-какай пачĕç. Колхоз вăйлă тухăçлă тырпул тата пахча-çимĕç туса илчĕ. Малтан шутласа палăртнă тăрăх, колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне икшер килограмм тырă илесçĕ. Кунсăр пуçне вĕсем кашни ĕçкунĕ пуçне 300-шер грамм хăяр, 200-шер грамм сухан, 2-шер килограмм çĕрулми, 400-шер грамм купăста тата укçан пĕрер тенкĕ илĕç. В. Степановпа И. Чаев колхозниксен çемьисем 100-шер пăт тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем илеççĕ. Кунти колхозниксем чăн-чăнах культурăллă та тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсен вăхăтĕнче колхозсемпе МТС-ра социализмла çĕрĕçĕн çĕршер ударникĕсемпе стахановецĕсем палăрчĕç. 65 çулхи колхозник Моисей Макаров кăçал 300 ытла ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозниксен ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен йышăннă постановлени колхозсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшакан хăватлă хĕçпăшал пулса тăчĕ. Çакна çирĕплетсе пама ик-виçĕ тĕслĕх çеç илер. Пĕрремĕш срокра ĕçкунĕсен минимумне тултарманшăн 65 çынна судпа айăпланă пулсан, иккĕмĕш срокра 18 çынна, виççĕмĕш срокра 5 çынна çеç судпа айăплама пулчĕ. «Искра Ильича», «Первое Мая», «Красная Чувашия» тата ытти нумай колхозсенче ĕçкунĕсен обязательнăй минимумне тултарман колхозниксем пачах та çук. Районри колхозсенче халĕ стахановецсен хисепĕ 2.500 çынран иртет.

Машинно-тракторнăй станци те кăçал начар мар ĕçлерĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли чаçсем çителĕксĕр тата горючи турттарса килес ĕçре пысăк чăрмавсем пулчĕç пулин те, МТС коллективĕ тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне декабрĕн 10-мĕш тĕлне 104,7 процент пурнăçларĕ. Планпа 21.225 гектар çинчи ĕçе тăвас вырăнне 22.289 гектар çинчи ĕçе турĕ. Çакăн хăйне ларакан хакне 16 процент чакарчĕ. 13.640 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. МТС-ри 8 трактор бригади, 12 комбайнер тата 10 тракторист çулталăкри планне тултарчĕç тата ирттерсе тултарчĕç. Ăмăртура Илья Петров ертсе пыракан 4-мĕш номерлĕ трактор бригади мала тухрĕ. Вăл çулталăкри ĕçсен планне 174,1 процент тултарса 3.239 килограмм горючи перекетлерĕ.

Трактористсенчен уйрăмăнах Тимофей Сорокинпа Александр Баданов юлташсем пархатарлăн ĕçлерĕç. Сорокин юлташ ЧТЗ тракторпа ĕçлесе планпа 450 гектар сухалас вырăнне 990 гектар сухаларĕ, 1.636 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çавăн пекех Баданов юлташ та çулталăк планне 185 процент тултарчĕ, 1.358 килограмм горючи перекетлерĕ. Вĕсене ВКП(б) членĕн кандидатне илтĕмĕр. ВКП(б) членĕ Захар Петров комбайнпа тырă пуçтарса кĕрес плана 215 процент тултарчĕ. Хĕрарăм трактористкăсем те начар мар ĕçлерĕç. 42 хĕрарăм трактористкăран 20-шĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухрĕç. ВКП(б) членĕ Дария Ермолаева çулталăк планне 258 процент тултарчĕ, 945 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. 17 çулхи комсомолка Нина Кузьмина, пуçламĕш çул ĕçлет пулин те, тракторпа тумалли çулталăкри ĕçсен плане 179 процент пурнăçлама тата планпа пăхнинчен 22,4 процент чухлĕ перекетлесе хăварма пултарчĕ.

Колхозниксем тата машинно-тракторнăй станцинчи работниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе пĕр чарăнусăр тата анлăн туса пырса, эпир ытти ĕçсене те вăхăтра тума тăрăшрăмăр. Декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне районри 31 колхозран 29-шĕ натуроплата тыррине пĕтĕмĕшпех татрĕç.

Çак çитĕнӳсене эпир ĕççыннисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янипе, массăллă-политикăллă ĕçе кунĕн-çĕрĕн туса пынипе, кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнипе, вĕрентсе çитĕнтерсе пынипе турăмăр. Мала тухакан бригадăсемпе трактористсене пама МТС-ра куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав, бригадăсенче хĕрлĕ флагсем, трактористсен ĕçне кăтартакан хăма туни, стена хаçачĕсем тăшах кăларса тăни социализмлă ăмăртăва лайăх ертсе пыма майсем туса пачĕç.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе 9 коммунист, 15 комсомолец тата партире тăман 9 юлташ хутшăнчĕç. Вĕсем ку ĕçре хăнăхусем илсе хăйсем те нумай ӳсрĕç, парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсен шутĕнче комбайнер Кузьмин, трактористсем А. Баданов, Сорокин, И. Иванова, К. Егорова, С. Потапов тата ытти те. МТС-ра ĕçлекенсемпе колхозниксем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕç фронта пулăшассине вăйлатас лозунгпа туса пыратпăр. Районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пĕр миллион тенкĕ ытла пухрĕç. МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа чылай пухса пачĕç. МТС политотделĕ механизаци кадрĕсем хатĕрлес тата колхоз кадрĕсене тупса палăртас, вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе те паллă ĕçсем тунă. Кăçал курссенче 71 тракторист, 9 комбайнер, трактор бригадин бригадирĕсем 5 çын, комбайнер помощникĕсем — 19 çын, машиноведсем 14 çын хатĕрлерĕмĕр. Вĕсем хушшинче 85 хĕрарăм. Халĕ, çитес çулхи çуракине хатĕрленнĕ май, кадрсем хатĕрлесси çине уйрăмăнах тимлĕн çаварăнса пăхатпăр. Ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа эпир производствăран уйăрса 41 çынна трактористсем пулма вĕрентме тытăнтăмăр, вĕсенчен 40-шĕ хĕрачасем, механик пулма 2 çын вĕренет.

1943 çулхи çуракине хатĕрленнĕ май, 12 трактор, 15 культиватор, 10 сеялка, 30 плуг юсаса хатĕрлерĕмĕр.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пирĕн МТС-ра тата районри колхозсенче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пирĕн задача — вăл çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме колхозсене пулăшасси.

В. ЧЕРНОВ,
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă тата халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пысăк пунктра урамсенче çапăçаççĕ. Противникран тасатнă виçĕ кварталра гитлеровецсен 400 вилли, персе çĕмĕрнĕ 4 танк, 11 автомашина, 4 оруди выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен «За родину» ятлă отрячĕ пысăк чугунçул станцинче вырнаçнă нимĕç гарнизонне пырса тапăннă. Партизансем хуларн 58 салтака персе вĕлернĕ, ыттисем вара тарса саланнă. Совет патриочĕсем станцин оборудованине сирпĕнтерсе янă, боеприпассене, тумтирсене тата ытти трофейăсене илсе кайнă. Тепĕр станци районĕнче партизансем чугунçула 500 метр тăршшĕ пăсса хунă тата телефонпа телеграф пралукĕсене километр тăршшĕ касса илнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ халăх пурăнакан пунктри нимĕç гарнизонне çĕрле пырса тапăннă та 27 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче çапăçакан боецсемпе командирсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен фашистла бандичĕсем тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă. «Декабрĕн 23-мĕшĕнче Орджоникидзе крайĕнчи Ищерская станци патĕнче (вăл станцăна халь нимĕçсенчен ирĕке кăларнă) минăсем хурса тухнă вырăнсене минăсенчен тасатнă чухне гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ 20 совет боецĕпе командирĕн виллисене тупнă. Фашистла ирсĕрсем тыткăна илнĕ боецсене тискеррĕн асаплантарнă. Пиллĕкĕшĕн ар органĕсене касса пăрахнă, нумайĕшĕн ӳчĕсем çинче асаплантарнин йĕрĕсем пур. Ытти вилĕсем çинче хĕртнипе кăмрăкланнă вырăнсем пур. Пуç шăммисем çинче мăка япалапа пенипе шăтнă вырăнсем пур. Тупнă документсем тăрăх çакна пĕлнĕ: çав асаплантарса вĕлернĕ çынсем хушшинче С. Н. Мальков тата Н. А. Кошенков юлташсем пур». Акта капитан Кретон, çар фельдшерĕ Кулагина, 1-мĕш рангри техник-интендант Киселев, старши лейтенант Кришенко, сержант Левченко тата красноармеец Зайцев алă пуснă.

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсем Парижри Сен-Лазар ятлă вокза...а нимĕçсен дипломатиллĕ курьерĕн багажне хунă вагона çунтарса янă. Нейире патриотсем нимĕçсен çар учрежденийĕ тăракан çурта бомба пăрахнă. Сен-Денире çамрăк французсен ушкăнĕ нимĕç салтакĕсен столовăйне темиçе граната ывăтнă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче, **Центральнăй** фронтра, **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Хула варринче штурмлакан отрядсем нимĕçсен дзочĕсемпе блиндажĕсене çавăрса илсе пĕтерсе пынă. Çĕр каçа 12 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ тата 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн часть противникăн контратакине сирсе янă. 100 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсен, нимĕçсем хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Артиллерипе миномётсенчен персе 7 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ. Артиллерин 2 батарейине тата миномётсен 4 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем çапăçса малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 2.000 ытла салтакĕпе офицерне, 20 танкне тата 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн пĕр соединени кăна противникăн 600 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем, каялла чакакан противника хăваласа пырса, нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 9 танкне çунтарса янă, 14 орудине, 26 пулеметне, 18 автомашинине тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 39 лавне тытса илнĕ. Тепĕр участокра противник, совет чаçĕсене малалла кайма чарас тесе, меллĕ рубежсенче вăйлă хӳтлĕх хăварнă. Пирĕн чаçсем вăйлăн хирĕç пырса çапса, гитлеровецсене каялла сирсе янă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 260 çынна тыткăна илнĕ, 3 орудие, 17 пулемета тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Великие Луки районĕнче Дьяконов юлташ командир пулса тăракан чаçăн подразделенийĕсем вăйлăн çапăçнă хыççăн тăшманăн 2 опорнăй пунктне тытса илнĕ. Нимĕçсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра пирĕн часть тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ узелне тытса илнĕ. Пирĕн пĕр гвардейски танковăй часть наступлени туса пынă виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 900 çити салтакĕпе офицерне, 17 танкне, 32 орудине, пĕр броневикне, 5 тягачне, 28 миномётне тата 56 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

Тăшманăн 46 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем йышăннă рубежсене тĕреклетнĕ, хăшпĕр участоксенче малалла куçса пынă. Противникăн икĕ батальона çити пехоти, танксем пулăшса пынипе, иртнĕ кун пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пунктсене тепĕр хут тытса илме хăтланнă. Совет боецĕсем противникăн контратакисене сирсе ярса, ăна хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне, 21 пулеметне, 12 автомашинине, 12 миномётне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 7 танкне тата 2 бронемашинине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктра виççĕмĕш кун ĕнтĕ урамсенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ, çав çапăçусенче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра кĕрешекен партизансен «Боевой» ятлă отрячĕ нимĕçсен 112 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 2 миномет, тата темиçе пулемет пĕтерсе тăкнă. Çурçĕр Кавказри партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен 70 салтакне тата 22 полицейскине вĕлернĕ. Çав отрядри партизансен çулсем çинче кĕрешекен группи 63 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Аялараха нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Калинин облаçĕнчи Зайцево ялĕнче 12 красноармеецăн туртса-çуркаласа пĕтернĕ виллине тупнă. Гитлерла палачсем çав тыткăна лекнĕ çынсене тискеррĕн асаплантарнă. Çиеллтен тăхăнмалли тумтирпе атă-пушмакăн юлашкийĕсене, çывăхра тупнăскерсене, тĕплĕн сĕнаса пăхни çакна кăтартнă: фашистла ирсĕрсен çав жертвисем — аманнă красноармеецсем пулнă, вĕсем пирĕн чаçсем Зайцево ялне атакăланă чухне тыткăна лекнĕ пулнă». Акта майор Ройзен, майор Петренко, старши лейтенант Рулев, лейтенант Попов, красноармеецсем Якушевский тата Старков алă пуснă.

* * *

Грецири партизансем, Агринион районĕнче кĕрешекенскерсем, 120 ытла итальянец салтакне вĕлернĕ. Крит утравĕ çинче патриотсем нимĕçсен горючи хунă складне тапăннă та, упăн хуралне персе вĕлерсе, склада çунтарса янă.

Пропагандăпа агитаци работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Декабрĕн 21-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче Шупашкарта агитаципе пропаганда работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсем, парткабинетсен заведующийĕсем, райхаçатсен редакторĕсем тата пропагандистсем пулчĕç.

Сталин юлташăн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчи доклачĕ тата агитаципе пропаганда ĕçĕнчи задачăсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче политикăллă тата хуçалăхла задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте агитаципе пропаганда мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Канашлура пулнисем çавăн пекех «Отечественнăй вăрçă условийĕсенче марксизм-ленинизм теорине вĕренмелли формăсемпе методсем» (докладчикĕ ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Иванов юлташ), «Агитаторсемпе агитколлективсен ĕçне йĕркелесе ертсе пырасси» (докладчикĕ ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отдел заведующийĕн заместителĕ Сдобнов юлташ), «Районсемпе заводсенчи хаçатсен вăрçă вăхăтĕнчи задачисем» (докладчикĕ «Чăваш Коммуни» хаçатăн ответлă редакторĕ Яковлев юлташ), «Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсемпе задачисем» (докладчикĕ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ) темăсем тăрăх докладсем итлерĕç.

Кашни доклад хыççăнах ăна сӳтсе яврĕç. Районсенчен килнĕ юлташсем докладсене сӳтсе-явас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç, пĕр-пĕрин опычĕсемпе паллашрĕç, çавăн пекех тата ситменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартрĕç.

Канашлу ĕçне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци Управленийĕн Паешина, Серебрякова тата Кочнев юлташсенчен тăракан пропаганда группи хутшăнчĕ. Вĕсем канашлура пулнисене: «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем», «Пирĕн тылри иртнĕ çул хушшинчи организаторла ĕç», «Совет Союзĕн, Англин тата Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен гитлерла Германипе унăн Европăри союзникĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳри боевой союзĕ» темăсем тăрăх лекцисем вуласа пачĕç.

Канашлура пулнисем çавăн пекех ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Орленко юлташ «Хĕвеланăç Европăн вăхăтлăха оккупациленĕ çĕршывĕсенчи гитлерла вăрă-хурахла «çĕнĕ йĕрке» ятлă темăпа тунă доклада итлерĕç.

Канашлу вĕçĕнче ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах каларĕ. Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче районсенчи агитаципе пропаганда ĕçĕнчи ситменлĕхсене усăмлă тĕслĕхсем илсе кăтартса пачĕ.

Юлашкинчен Чарыков юлташ канашлура пулнисене ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

„Чуп тумалли право"

Ку фрица пирĕн боецсем пĕр тĕттĕм каç тытса пычĕç. Фриц питĕ ӳсĕрччĕ. Пĕлме çук, тен вăл хăйĕн кĕлеткине епле те пулсан ăшăтас тесе ĕçнĕ пуль (ытти нимĕç салтакĕсем пекех, вăл пĕр çӳхе шинель, сăран пушмак тата çуллахи пилотка çеç тăхăннăччĕ), тен кăмăлне киллентерес, савăнас тесе ĕçнĕ...

Тӳрех калас пулать—ку кашкăр питех те савăнса пурăннă. Мĕн тăвас тенĕ—çавна тунă. Çаратасса ним виçесĕр, чарусăр çаратнă ĕнтĕ, хăйĕн кăмăлне тултарма пĕр айăпсăр совет хĕрарăмĕсене, ачисене, старикĕсене персе вĕлернĕ, мирлĕ ялсемпе саласене çунтарнă, çав вăхăтрах Германири пĕр-пĕр йытами патне «чĕрене ирĕлтерекен» çырусем çырнă.

Куна эпир ним иккĕленмесĕрех, чăнласах калатпăр, мĕншĕн тесен унăн фрэнчĕн кĕсйинче вăл гитлерла Германи умĕнче питех те «чаплă ĕçсем» тунине кăтартакан документ тупрăмăр...

Документчĕ вара чăнах та пит сайра тĕл пулаканскер. Ун пек ирсĕр хута тĕнчери пĕр çĕршывра та тупас çук, ун пек хут хальхи Германире çеç пулма пултарать!

Документа çак тискер кайăк хуть епле хĕре те чуптума пултарнине çирĕплетсе çырса панă.

«Çак хута кăтартакан... (ячĕпе хушамачĕ) хуть епле нимĕç хĕрне те чуптума пултарать. Хĕр хирĕç тăрсан, ăна вăйпах итлеттерме пултарать...»

Çакăн пек пулса пырать ĕнтĕ ку хут тăрăх. калăпăр, нимĕç бандичĕ урампа утать. Сасартăк—илемлĕ хĕрэ курать! Ним шутласа тăмасăрах хĕр патне пырать те хăйĕн документне кăтартать:

— Ман сана чуптăвас килет. Атя ман хыççăн!

Анчах хĕр килĕшмест. Вара фашист хулиганĕ хĕре çавăрса тытать те, тĕттĕмрех вырăна илсе кайса, хăйне нимĕç командованийĕ шуйттан паллипе — свастикăпа çирĕплетсе панă правăпа усă курать...

Этемлĕх историнче те, нихăш ĕмĕртэ те пулман кун пек хăрушă та тискер йăласем! Пур халăхсем те, пур вăхăтсенче те хĕрарăм чысне, юрату туйăмне хисеплесе пурăннă. Гитлер çынсенĕсем çеç выльăхсемпе танашма пултарнă. Хальхи Германире этем туйăмĕсем те, юрату та, çемье те çук, унта намăсла туртăмсене выльăхла киллентерни çеç юлнă. Унта хĕрарăмама, арçын—аçа. Юрату вырăнне — «чуп тумалли право» паракан документсем, çемье вырăнне — случной пунктсем. Ку йĕркесем ĕнтĕ пĕтĕмпех Германин хальхи тискер правительĕсене тата вĕсен ылханлă «çĕнĕ йĕркине» тивĕçлĕ. Вăл эсрелле «йĕркене» пĕтермеллех, вăл епле пулсан та пĕтмелле!

Писатель-фронтовик, лейтенант ЛЕОНИД АГАКОВ.

Республикăри МТС-сем тракторсем юсас тĕлĕшпе IV-мĕш картал планне декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле пурнăça кĕртсе пынине кăтартакан

СВОДКА

(Процентпа)

МТС-сем	Капитальнăй ремонт	Текущи ремонт	Пурĕ ремонтланă
Елчĕк	142,8	106,2	117,4
Шăхасан	33,3	175,0	114,5
Ишлей	150	83,3	110
Канаш	83,3	128,5	107,7
Куславкка	100	107,7	105,5
Элĕк	116,6	90,9	100
Шупашкар	100	100	100
Красноармейски	142,8	54,5	88,8
Тăвай	83,3	90,9	88,2
Йĕпреç	50	111,1	86,6
Вăрмар	62,5	100	86,3
Чкаловски	83,3	85,7	85
Комсомольски	125	57,1	81,8
Вăрнар	90	69,2	78,2
Çĕрпӳ	75	76,9	76,1
Первомайски	100	57,1	66,6
Етĕрне	50	70	64,2
Пăрачкав	11,1	93,7	64
Кувакино	60	66,6	64
Сĕнтĕр	60	58,3	58,8
Шăмăршă	40	57,1	50
Хĕрлĕ Чутай	100	16,6	50
Çĕмĕрле	50	42,8	44,4
Улатăр	14,2	36,3	27,7
Сĕнтĕрвăрри	—	40	25
ЧАССР тăрăх	76,9	83	80,8
Декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	67,1	78,8	74,8

Ют çĕршывсенче

НОРВЕГИРИ ПĂЛХАНУСЕМ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 28-мĕшĕ (ТАСС). Осло хулинчен Норвегири чылай хуласенче пăлханусем пулни çинчен пĕлтереççĕ. Арендаль тата Блекке-фиорд (Кăнтăр Норвеги) хулисем хушшинчи района Германи войскисене янă. Кристиансанд хулинче пăлханусем пулнă май, хĕçпăшалсем тытса усранăшăн айăпласа унта 50 норвежеца арестленĕ.

Пĕлтерӳ

Декабрĕн 30-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн ларусем туса ирттермелли залĕнче агитаторсем валли лекцисем пулаççĕ. Лекцисен темисем:

«Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем».

Лекцине ЦК ВКП(б) пропгруппин членĕ **Серебрякова** юлташ вулать.

«Вăрçăн иртнĕ çулталăкĕнче тылра тунă организаторла ĕçсем».

Лекцие ЦК ВКП(б) пропгруппин руководителĕ **Паешина** юлташ вулать.

Билетсене Горкомра, 124-мĕш номерлĕ пӳлĕмре, е парткабинетра илмелле.

ВКП(б) Горкомĕ.

Пирĕн землякcем

Çапăçу пуçланас умĕн

Мĕн тери таса ĕмĕтсемпе ырă шухăшсем пуçтарăнаççĕ ăсра çапăçăва кĕрес умĕн! Иртнĕ анлă кунçул, пурнăçăн пĕтĕм илемĕ куç умне питех те уççăн тухса тăрать. Пурнăçри кашни утăма, унăн пĕчĕк-пĕчĕк йĕрĕсене те аса илетĕн. Аса-илӳсем кăмăла киллентереççĕ, чĕрене савăнтараççĕ, ырă туйăма çĕклеççĕ; ун пек чухне пурнăçа нихăçанхинчен те ытларах, пĕтĕм чĕре вăйĕпе, пурнăçран нихăçан-нихăçан уйăрлас марран юрататăн. Çав тери илемлĕ пирĕн пурнăç.

Тепĕр виçĕ сехетрен çапăçу тапранмалла. Ун çинчен пур боецсем те пĕлеççĕ, çапăçу пуçланасса кĕтеççĕ. Вăхăт ерипен шăвать, минута сехет тăршшĕ тăсăлнăн туйăнать. Умра хаяр, юнлă та шелсĕр çапăçу. Кам пĕлет: вутпа çулăм витĕр кама чипер тухма тӳрĕ килĕ? Боецсенчен хăшне хăйĕн юнне юхтарса, уй варринче выртса, юлташĕсем малалла кайнине пăшăрханса пăхса юлма тивĕ. Кама, тен, юнлă хаяр çапăçун телейлĕ вĕçне курма тĕл килмĕ...

Вăрçă вăрçах вăл, унта сапла тем те пулма пултарать. Тем пулсан та, боец çакна пĕлет: унăн тăван çĕршывĕ, унăн тăван халăхĕ чĕрĕ юлать! Çитĕ вăхăт, унчухне вара ситререн сапнă пек вăйлă çумăр çăвать-и, е питçăмартисене чĕпĕтекен сивĕ çиллĕ санталăк тăрать-и, е çӳллĕ кăвак тӳпере сарă хĕвел пĕçертсе ярăнса çӳрет-и, пурĕпĕрех пирĕн ялсемпе хуласен урамĕсенче туллин халăх пулĕ. Мĕн ку? — тейĕпĕр эпир ун чухне. Ку çĕнтерӳ! — тейĕç пирĕн тăвансем, туссем, пирĕн арăмсемпе ачасем. Вĕсем, пире кĕтсе ывăннăскерсем, хăйсен куçĕсенчен савăнăçлă куççуль тăкса, пирĕн пата чупса пырса, пире ыталаса илĕç, пĕтĕм чĕререн тав тăвĕç. Нимĕç таптаса хăратнă вырăнсенче те часах пурнăç çĕнĕрен чĕрĕлсе чечекленĕ, пире ăшшăн пăхса ӳстернĕ çĕршывăм халиччендхи пекех, анлă кăкăрпа ирĕклĕн те çăмăллăн сывлĕ. Çĕршывăм çинче каранса тăнă вутпа вилĕм мĕлки сирĕлĕ. Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртĕ, ăру хыççăн ăру çитĕнĕ, анчах паян ыранхи ырă пуласлăхшăн юн тăкнă, хăйĕн юнĕпе, хăйĕн пурнăçĕпе тăван çĕршывăн чысне, мухтавне, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварнă боецăн ячĕ вĕсен ăстăнĕнче нихăçан та тĕксĕмленмĕ; унăн ячĕ, унăн вилĕмсĕр чапĕ çитĕнекен ăрусем умĕнче çăлтăр пек çиçсе тăрĕ; ун çинчен юрăсем кĕвĕленĕç, калавсем йĕркеленĕç, пысăк кĕнекесем çырăнĕç; унăн ячĕ вăйпа хăватлăх, паттăрлăх çăлкуçĕ пулса тăрĕ, вăл çĕршывăн мухтавне çĕклесе, илемлетсе тăрĕ.

Çакăн çинчен шухăшлаççĕ халĕ боецсем çапăçăва кĕрес умĕн. Вĕсем ун çинчен калаçаççĕ. Окопра тăрать-и, е блиндажра хăйĕн пулемечĕ умĕнче выртать-и, е миномётăн тĕреклĕх плитине çĕр çине çирĕплетсе лартать-и, е тупăн кĕпçине тăшман пуçĕ çине тĕллесе вырнаçтарать-и, — боецăн шухăшĕ тăван çĕршыв çинче, тăван халăх çинче, кил çинче. Анчах пуçра тем тери шухăшсемпе аса-илӳсем çаврăнаççĕ пулин те, боец умра сарăлса выртакан уйхиртен хăйĕн куçне пĕр самантлăха та вĕçертмест. Унта — тăшман. Çĕр ăшне чавăнса выртнă вăл; вăл кунта, ĕмĕр-ĕмĕр хура пулса пурăнас пек, хăй тавра тимĕр-бетонран тĕреклĕхсем туса, йĕплĕ пралукран йĕри-тавра карта тытса, урлă-пирлĕ окопсемпе блиндажсем чавса, вĕсем тавра е ăшне пулеметсемпе автоматсем, тупăсемпе минометсем лартса хӳтĕленнĕ. Леререх вара пирĕн тăвансем, вăхăтлăха нимĕçсен пусмăрĕ айне пулнă туссем. Вĕсем пире тĕттĕм çурçĕрте пурăнакан çынсем хĕвел тухасса кĕтнĕ пек кĕтеççĕ, пирĕнпе тĕл пуласса шанаççĕ.

Çав вăхăт çывхарать.

Тепĕр сехетрен командир калĕ:

— Тăван çĕршывшăн, пурнăçшăн, хамăрăн чыслăхпа ирĕклĕхшĕн, малалла! — тейĕ.

Командирăн сасси инçете-инçете сарăлса илтĕнĕ, тавралăхра нумайччен янраса тăрĕ. Унăн хăватлă сассине артиллери кĕмсĕртетни татах та ытларах вăй кĕртĕ. Йĕри-тавра минăсем шартлатса çурăлма пуçлĕç; пулеметсем трахлатса тăхлан çăмăрĕ тăкма тытăнĕç; уй-хир тăрăх хăйсен гусеницисемпе тăпрана чавса, тăпрапа пĕрле çынсен шăммисене лутăркаса танксем уласа чупса çӳреме пуçлĕç; сывлăш мотор шавĕпе тулĕ; тӳпери пăхăрса, тискеррĕн уласа бомбăсем ӳкĕç. Пĕтĕм çĕр кĕмсĕртетсе тăрĕ, тавракурăм вутпа хыпăнĕ.

Халлĕхе тавралăхра тĕлĕнмелле шăплăх тăрать. Хăмăр пĕлĕт айĕнчен час-часах уйăх чăмса тухать. Вăл хăйĕн вĕтĕ-вĕтĕ ярăмĕсемпе тĕттĕмлĕхе сирсе пăрахса, тавралăха çутатать. Кашни боец мĕн те пулин тăвать. Пĕрисем блиндажри хăй çути умĕнче е амбразурăсем витĕр кĕрекен уйăх çутинче кăнтăрла çырса пĕтереймен çырăвĕсене вĕçлеççĕ; теприсем килтисене, хăйсен тăван колхозне е заводне аса илсе, юлташне хумхануллăн каласа параççĕ, е ĕнер-паян килтен илнĕ çырăвĕсене ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тепĕр хут вуласа тухаççĕ. Чĕрери юратупа шăрçаласа çырнă сăмахсем урлă çак хумханчуллă вăхăтра атте-аннепе, тусăмпа, е тин çеç пуплеме, атте-анне теме вĕреннĕ ачампа калаçма, çырупа пĕрле ярса панă унăн сăнĕ çине пăхса савăнма, шухăшпа пĕтĕм кăмăлти ачашлăхпа ачана ыталаса, ăна вĕрин-вĕрин чуп туса илме мĕн тери аван! Ун чухне ачан питкуçĕнчи йĕрсене тинкерсе пăхса ларнă чухне, чĕре хăвăрттăн тапма пуçлать, вĕри юн ӳт-пӳ тăрăх хăвăрттăн чупса çӳренĕн туйăнать, кăмăл уçăлса çемçелет, вара калатăн:

— Чунăм, саншăн, санăн пуласлăхушăн, санăн телейӳшĕн!

Çав самантрах чĕре, пăвса пăчăртанă пек ыратать, вăл тарăхупа çилĕпе, курайманлăхпа тулать. Алăсем винтовкăна хытăрах чăмăртаса тытаççĕ, пĕвĕм те хăй тĕллĕнех çĕкленет, малалла ыткăнас килет, тăшман çине арăслан пек сиксе ларса, ăна лутăркаса, пĕрчĕн-пĕрчĕн вакласа, тыллаcа, çурса-ватса пĕтерес килет.

— Вĕлер нимĕçе, унсăрăн вăл сана вĕлерет! — чĕнет хăйĕн боецĕсене Казанков*). Блиндажри боецсем, унăн сăмахне ахаль ӳкерес мар тесе, пĕтĕм тимлĕхпе итлеççĕ. Ун çине вут пек çунакан куçĕсемпе шăтарас пек пăхаççĕ. Боецсемпе Казанковăн пĕр шухăш. Вĕсем хăйсен командирне юратаççĕ, унăн сăнарĕнче хăйсен шанчăклă юлташне, тусне, тăван аппăшне кураççĕ. Нумай хаяр çапăçусенче пулнă Казанков. Вăл хăйĕн хăюлăхĕпе хавхалантарса, боецсене сахал мар атакăна ертсе кайнă. Унăн боецĕсем хăй пек паттăррăн çапăçма, çапăçура — çĕнтерӳсĕсем пулма юратаççĕ. Сахал мар паттăр боецсемпе командирсене пăхса ӳстернĕ вăл. Вĕсем хушшинче орденсемпе тата медальсемпе наградăланă воинсем çĕр çын ытла: Акă Фурасев, унăн кăкрине Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илемлетет. Вăл чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ. Е тата Григорьев. Мĕн чухлĕ нимĕçсене хăйĕн пулемечĕпе вĕлермен-ши вăл? Унăн кăкăрĕ çинче медаль. Авă кĕтесре, Григорьевпа юнашар тепĕр чăваш çамрăкĕ Иванов тăрать. Кам манĕ унăн паттăрла ĕçĕсене! Майоров, Лаптев, Васильев, Зотин, Смирнов*) — вĕсем, чăваш халăхĕн ывăлĕсем ытти тăван халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, казахсемпе, тутарсемпе, украинецсемпе, белоруссемпе, вырăссемпе пĕрле тăван çĕршывшăн кăкăрпа тăраççĕ. Туслăх, тăванлăх пĕрлештерет вĕсене.

— Умра нимĕçе куратăн пулсан, пĕр утăм та ан пустар ăна, часрах вĕлер, унтан тепĕр нимĕçне шыраса туп, ăна та вĕлер, пульăна ан шелле, — тет Казанков. — Нимĕçе куçа-куçăн тĕл пулсан, ăна пăшалпа е гранатăпа вĕлерейменрĕн пулсан, икĕ аллупа пăвса вĕлер; вăю çитмест пулсан, мăйне шăлпа çыртса çур, куçĕсене чăрмаласа, çапса шăтар, ан парăн нимĕçе, вĕлер, вĕлер нимĕçе!..

Казанков сехет çине пăхса илчĕ.

— Вăхăт, юлташсем,—терĕ вăл. — Пурçăмĕр та вырăнта пулăр. Унтан блиндажри пур боецсене те алă парса тухрĕ, кашни боеца сывлăх сунчĕ.

— Командир юлташ, — терĕ Григорьев. Вăл Казанков аллине хăйĕн аллипе тытса чарăнса тăчĕ. Григорьев кĕсъерен тирпейлĕн тăваткăлласа хуçлатнă хута кăларса Казанкова тыттарчĕ. — Чĕрем уçă, пĕлетĕп, умра паттăрлă ĕç. Вăл ăнăçлă пулать. Анчах ку ĕçе коммунист аллипе тăвасшăн эпĕ. Тем пулĕ, анчах мана коммунист тесе шутлăр.

:..Блиндаж пушанчĕ. Боецсем саланчĕç. Вĕсем харпăр-хăй вырăнне йышăнчĕç. Шурăмпуç çути тӳпере карăнчĕ. Пĕлĕтелле хĕрлĕ ракета çиçĕм пек вĕçсе хăпарчĕ. Çав самантрах артиллери кĕрлесе кайрĕ.

Вăрман хĕррине пухăннă пирĕн танксен моторĕсем шавлама пуçларĕç. Хĕвелтухăç енчен вĕрекен çил совет соколĕсем вĕçсе çывхарса килнине систерет. Артиллери вучĕ хăватланнăçемĕн хăватланса пырать. Час-часах пирĕн «катюша» залпсем парать. Çĕр чĕтрет, кĕмсĕртетет. Унăн залпĕсем хыççăн тавралăха хура тĕтĕм карса илчĕ. Тăшман оборони тĕпренсе ишĕлет.

Танксем малалла ыткăнчĕç. Пехота ура çине тăчĕ. Вăл, артиллери вучĕпе танксен хӳтĕлĕхĕнче пытанса, окопсенче хĕсĕнсе выртакан нимĕçсем çине пĕтĕм вăй-халпа тапăнчĕ. Авă Григорьев, вăл хăйĕн отделенийĕпе пĕр блиндажри нимĕçсен гарнизонне çавăрса илчĕ. Фурасев хăйĕн батальонĕпе, сылтăм флангра, яла виçĕ енчен хупăрласа, нимĕçсене вут кăшăлĕпе çавăрса хĕсрĕ. Сулахай флангра Казанков ертсе пыракан ударлă группа нимĕçсен оборонине малалла çĕмĕрсе кĕрет. Унăн боецсем ял урамĕнче нимĕçсемпе тытăçса, вĕсене хăй хыççăн хăварса, урам хыççăн урамран хире-хире кăларса çĕмĕреççĕ.

Юнлă, пит те хаяр çапăçу. Вăл минутăран минутăна çивĕчленсе, хĕрсе пырать. Пирĕн боецсем тăван çĕршывăн кашни пусăмне нимĕç ирсĕрĕсенчен тасатаççĕ, тăван çĕршыва пĕтĕм чĕре вăйĕпе юратнине, çĕршывăн чысне, унăн мухтавĕпе никама пăхăнманлăхне çӳле-çӳле çĕклесе малалла, хĕвеланăç еннелле каяççĕ.

Капитан Мих. ЯКИМОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

*) Казанков Вăрнар районĕнчен.

*) Фурасев Куйбышев облаçĕнче ĕçленĕ, Çĕрпӳ районĕнче çуралнă. Григорьев, Майоров, Лаптев, Смирнов — Сĕнтĕр районĕнчен, Зотин Куславкка р-чен, Васильев Канаш р., Иванов Шупашкартан.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11278 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.